**Аннене**

Эсĕ хирĕç ан тух эп киле таврăнсан,
Уçса хур алăка, тухса кай пахчана.
Кулленхи ал ĕçне сак çине хăварсам —
Тахçанах ман валли çыхакан чăлхана.

Çĕрулми калакне таянтар кĕтессе,
Кăранташ татăкне хур эс кантăк çине,
Эп ăнланăп хамах кĕсьери конвертсем
Ма тĕл-тĕл сарăхса, хуралса пĕтнине.

Сăмахпа эс каллех ӳпкелеймĕн мана:
Упкевӳ манăçать эп килте пулнă чух.
Ăсатса янă чух—ятламаççĕ çынна...
Эп киле таврăнсан эсĕ хирĕç ан тух.

1954

*Айхи, Г. Аннене : [сăвă] // Айхи, Г. Сăвăсемпе поэмăсем / Г. Айхи. – Шупашкар, 1994. – С. 29.*